Муркаш район хаçачě

# Çěнтерӳ ялавě

1944 çулхи çу уйăхěн 5-мěшěнчеппе тухать

74 (8238) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи юпа (октябрь) уйăхěн 1-мěшě ✻ Хакě ирěклě

## Октябрěн 1-мěшě – Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě



**Район администрацийěн савăнăçлă йăла-йěрке залěнче ěнер Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě ячěпе ěç ветеранěсене, ăслă ăру çыннисене чысларěç. Ял тăрăхěсенчен пухăннă чи хастар та чи маттур ěçченсене çитсе килекен уяв ячěпе район администрацийěн пуçлăхěн пěрремěш çумě В. Ананьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн депутачě Н. Ванеркин, депутатсен районти Пухăвěн председателěн çумě, агропромышленноç комплексěн ветеранěсен районти канашěн председателě В. Вязов, ветерансен районти канашěн председателě Е. Куликова, пенсионерсен союзěн районти уйрăмěн канашěн председателě А. Скворцов саламласа тав сăмахěсем каларěç.**

**Пурнăçра халě те активлăхпа палăрса тăракан ватăсем, çемье çавăрса 50 çул хушши килěштерсе пурăнакансем район администрацийěн Тав çырăвěсене тивěçрěç, "Чăваш Республикин ěç ветеранě" ят илнисене удостоверенисем пачěç. Пухăннисене Муркашри культурăпа кану центрě çумěнчи ветерансен хорě уяв концерчě парнелерě.**

**Сăн ӳкерчěкре эсир хисеплě ватăсене – Ярапайкасси ял тăрăхěнчи Кӳстерек ялěнчи Зинаида Сорокинăна тата вырăнти ветерансен канашěн председательне Зоя Романовăна куратăр. Ял тăрăхěнче ирттерекен кирек епле мероприятире те активлă вěсем.**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчěкě.**

# Пирěн кулленхи тимлěхе тивěç

**Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě умěн район хаçачěн сотрудникě районти социаллă хӳтлěх пайěн пуçлăхěпе Валентина АНИКИНĂПА тěл пулнă, патшалăх уйăракан социаллă хӳтлěх майěсене тивěçекенсем çак куна мěнле кăмăл-туйăмпа кěтсе илни пирки каласа пама ыйтнă:**

– Ватă çынсен кунě вăл ăслă ăру çыннисене хисеп туни кăна мар, ку вăл – ветерансемшěн тимлесси ырă йăлана кěни те. Ватă çынсен кунě пулин те, уявě çамрăк темелле. Ăна 1991 çултан тытăнса кăна паллă тăватпăр. Асăннă кун пире çулланнă çынсем тěлěшпе вěçěмех тимлěх пулмалли пирки аса илтерсе тăма тивěç. Ватă çынсен пурнăç пахалăхне ӳстерсе пырасси пирěн патшалăхăн тěп задачисенчен пěри пулса тăрать. Çапла вара социаллă пулăшăва тивěçлисене патшалăх уйăхсерен укçа тӳлевěсем, субсидисемпе пособисем уйăрса парать.

Паянхи куна пирěн районта 9935 пенсионер пурăнать. Вăл шутран Аслă Отечественнăй вăрçă участникěсемпе вăрçă инваличěсем 47 çын, вăрçăра вилнě çар çыннисен тăлăх мăшăрěсем 2 çын, вăрçă участникěсен тăлăх мăшăрěсемпе тыл ěçченěсем 1104 çын, ěç ветеранěсем 4015 çын. 11393 çын федераци тата республика бюджечěсенчен уйăрса паракан социаллă пулăшу мелěсемпе усă курать.

Социаллă пулăшу калăпăшě çултан-çул ӳссе пырать. Федераци çăмăллăхěсемпе усă куракансене пурăнмалли çурт-йěрпе коммуналлă услугăсемшěн тӳлеме уйăхсерен укçа уйăрса параççě.

Социаллă хӳтлěх пайě граждансене çурт-йěрте пурăннăшăн тата коммуналлă услугăсемшěн тӳлеме субсидисемпе тивěçтерессипе пысăк калăпăшлă ěç пурнăçлать. Кăçал кăна 396 çемьене 3 млн. тенкě ытла субсиди уйăрса панă.

Инвалидсене, вăрçă участникěсемпе вăрçăра вилнисен тăлăх мăшăрěсене пурăнмалли çурт-йěрпе тивěçтересси пурнăçа ăнăçлă кěрсе пырать. Социаллă хӳтлěх пайě урлă вěсене пурăнмалли çурт-йěр туянма укçа уйăрса парса пулăшатпăр. 2014 çулта 6 ветеран пурăнмалли çурт-йěр туянма свидетельствăна тивěçрě. Пěтěмěшле вара 2009 – 2014 çулсенче 250 вăрçă ветеранěпе 2 инвалид свидетельство илсе хăйсен пурăнмалли условийěсене лайăхлатма пултарчě. Черетре татах 6 ветеран. Свидетельствăпа тивěçтерекен укçа тӳлевě 1050,66 пин тенкěпе танлашать.

2014 çулта ватă çынсене медицина кăтартăвěсене кура санаторипе курорт путевкисене 19 уйăрса патăмăр. Ěç ветеранěсемпе пенсионерсем 14 çын социаллă тата сывлăх сиплевěн "Вега" центрěнче хăйсен сывлăхне çирěплетме пултарчě.

Ěç стажне кура "Чăваш Республикин ěç ветеранě" ят парасси пирки йышăну тунăранпа Муркаш районěнчи 1108 пенсионер çак ята илме пултарчě, удостоверени илнипе пěрлех социаллă çăмăллăхсен правипе тивěçлипе усă курма тытăнчě. Чăваш Республикин Президенчěн ку ята парасси пирки Указě 2012 çулхи январěн 1-мěшěнчен тытăнса вăя кěчě. Çапла вара халě 45 çул ěç стажě пур арçынсемпе 40 çул ěç стажě пур хěрарăмсем пенсие тухнă май "Чăваш Республикин ěç ветеранě" ята тивěçнě хыççăн уйăхсерен 1082 тенкě укçа тӳлевне илсе тăраççě, çыхăну услугисемшěн 50 процент кăна тӳлеççě. 2014 çулта "Чăваш Республикин ěç ветеранě" ята 148 çын, "Ěç ветеранě" ята 86 çын тивěçрě.

Патшалăх тата общество тивěçě – пирěн аттесемпе асаттесене, аннесемпе асаннесене пулăшупа тата тимлěхпе тивěçтересси. Район территорийěнче социаллă услугăсемпе тивěçтерекен ятарлă 4 учреждени вырнаçнă. Кусем вěсем çынсене социаллă пулăшу мелěсемпе тивěçтерекен Муркашри центр, ватă çынсемпе инвалидсен Йӳçкассинчи 50 вырăнлă интернат çурчě, вăрçă тата ěç ветеранěсен Каршлăхри 25 вырăнлă интернат çурчě тата Шомикри 150 вырăнлă психоневрологи интерначě. Çынсене социаллă пулăшу мелěсемпе тивěçтерекен центр çумěнче Мăн Сěнтěрте ватă граждансен вăхăтлăх пурăнмалли 12 вырăнлă уйрăмне йěркеленě. Пěччен пурăнакан 95 ватă çынна хăйсен килěсенче пăхса тăратпăр.

Ватă çынсемшěн тимлесси, тăрăшасси – пирěншěн кашниншěнех чи таса тивěç. Ун пирки манма никамăн та право çук. Мěншěн тесен аслă ăру çыннисем – çěр-шывăн ылтăн фончě, ырă йăла-йěркесене упраса пурăнакансем. Вěсем патриотизмăн, ěçе парăнассипе пысăк тӳсěмлěхěн тата оптимизмăн тěслěхě пулса тăраççě.

Чылайăшě вěсенчен ватлăх çулěсене пăхмасăрах паянхи пурнăçра активлăхпа палăрса тăрать. Тивěçлě канура пулин те, ветерансен юхăмне, çамрăк ăрăва патриотика тата нравственноç воспитанийě пама, культурăллă-массăллă мероприятисене активлă хутшăнаççě.

Пирěн хисеплě ветерансем! Пěтěм чун-чěререн сире çирěп сывлăх, вăрăм кун-çул, хăвăрăн ачăрсемпе мăнукăрсен юратăвěпе хисепне, ăнăçу, çителěклěх тата чун-чěре лăпкăлăхне сунатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

### ПИРĚН ХИСЕПЛĚ ВЕТЕРАНСЕМ!

Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě ячěпе сире чěререн саламлатăп!

Аслă ăру вăл – калама çук паттăрлăх, патриотизм тата çирěплěх, вăрçă çулěсенчи тата ěç фронтěнчи мěн пур йывăрлăха чăтса ирттернě, çěр-шыв аталанăвне пысăк тӳпе хывнă çынсен ăрăвě. Хаклă ветерансем, сирěн çирěп кăмăл-туйăм, эсир пурнăçра активлă позици йышăнни, сирěн иксěлми энерги çамрăксемшěн тěслěх пулса тăраççě. Ӳсěм çулне пăхмасăрах чылайăшě сирěнтен ěçлеме пăрахмасть, общество ěçне-хěлне хутшăнать, çитěнекен ăрăва воспитани пама тӳпе хывать.

Сире хăвăр ěçěршěн пěтěм чунтан тав сăмахě калатăп тата сывлăх, вăрăм ěмěр, кăмăл-туйăм лăпкăлăхě, телей те анăçу сунатăп!

**Сире хисеплесе Раççей Федерацийěн Федераци Пухăвěн Федераци Канашěн членě Г. НИКОЛАЕВА.**

### ХИСЕПЛĚ ПЕНСИОНЕРСЕМ, ВĂРÇĂ ТАТА ĚÇ ВЕТЕРАНĚСЕМ!

Сире Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě ячěпе саламлатăп!

Çак уяв Тăван çěр-шыв ырлăхěшěн тăрăшса ěçленě, хăйсен паха опытне тата пурнăçри ăсне çамрăксене паракан аслă ăру çыннисем çине патшалăх уйрăмах тимлěн пăхнине çирěплетсе парать.

Ватă çынсене пурăнма лайăх майсем тăвасси – влаç органěсемпе обществăн тěп тěллевě. Чăваш Республикинче ăна пурнăçлассишěн тăрăшса ěçлеççě. Халăхăн социаллă ыйтăвěсене тивěçтерекен нумай профильлě учрежденисен тытăмě Чăваш Енре пурăнакан ватăсене кирлě пек пулăшу пама май парать, çавнашкал пулăшу ěçěсен йышě тăтăшах анлăланать. 2014 çулта республикăри социаллă сферăна аталантарма 6,5 миллиард тенкě яма палăртнă.

"Чăваш Республикин ěç ветеранě" хисеплě ят туса хурасси çинчен йышăну çирěплетнěрен ěç стажне кура Чăваш Енри 25 пин ытла пенсионер хăйěн ěçне тивěçлипе хакланине курса ěненнě тата ветеран удостоверенийěпе пěрле социаллă çăмăллăх илмелли правăна тивěçнě.

Пирěн пенсионерсемпе ветерансем пурнăçри хастарлăхěпе палăрса тăраççě, вěсем тěрлě спорт тата общество мероприятийěсем йěркелесе ирттереççě тата унта йышлăн хутшăнаççě. Республика команди кăçалхи çěртме уйăхěнче Шупашкарта иртнě Раççейри пенсионерсен пěрремěш спартакиадинче ăнăçлă ăмăртрě. Чăваш Енри 60 çултан аслăрах ӳсěмри 12 пине яхăн çын спортпа тăтăшах çыхăну тытать, çакă пурнăç тăршшěне ӳстерме пулăшать – 2011 çултан тытăнса 2013 çулччен республикăра ку кăтарту икě çула çити пысăкланнă.

Хаклă ветерансем! Сирěн пурнăçри опытăр, кăмăл-сипет тата этемлěх принципěсем, чун тараватлăхěпе тарăн ăсăр паянхи çамрăксене пурнăçа лайăхрах пěлсе çитме, ырă ěçсем тума, обществăна усă кӳме пулăшаççě.

Сире пурсăра та çирěп сывлăх, иксěлми вăй-хал, лайăх кăмăл тата, паллах, хăвăрăн тăванăрсемпе çывăх çыннăрсен юратăвěпе тимлěхне туллин туйма сунатăп!

**Чăваш Ен Пуçлăхě М. ИГНАТЬЕВ.**

### ХИСЕПЛĚ ПЕНСИОНЕРСЕМ, ВĂРÇĂ ТАТА ĚÇ ВЕТЕРАНĚСЕМ!

Сире Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě ячěпе ăшшăн саламлатăп.

Пирěн ветерансем телейлě пуласлăхшăн тăшманпа çапăçнă, пěрре мар вилěмпе куçа-куçăн тěл пулнă. Вěсен паттăрлăхě тата хастарлăхě паянхи тата пулас ăрусемшěн ырă тěслěх пулса тăраççě. Ватă çынсен пысăк ăсě, пурнăç тата ěç опычě пире кулленхи ěçре пулăшса пыраççě, çамрăксене тăван çěре, халăхăн йăли-йěркине хисеплеме вěрентеççě. "Ваттисěр латти çук", – тесе ахальтен каламан ěнтě.

Ватă çынсене пур енлěн пулăшасси, вěсен пурнăçне лайăхлатасси çине патшалăх пысăк тимлěх уйăрать. Аслă ăру çыннисене пенсипе вăхăтра тивěçтерсе тăраççě, ятран паракан социаллă программăсем ěçлеççě, ватă çынсен пурăнмалли условийěсене те лайăхлатма тăрăшатпăр.

Çитěнекен ăрăва ырă тěслěх кăтартнăшăн, вăй-халăра шеллемесěр производствăра хастар тăрăшнăшăн, пире мирлě пурнăç парнеленěшěн, çирěп кăмăлăршăн тайма пуç сире.

Ěмěрěр вăрăм пултăр, таса та сывă çӳрěр. Çывăх çыннăрсен чун ăшшипе юратăвне туллин туйма сунатăп. Сирěнпе юнашар яланах ачăрсем, мăнукăрсем пулччăр.

**Район администрацийěн пуçлăхě Р. ТИМОФЕЕВ.**

### ĚÇПЕ ВĂРÇĂН ХИСЕПЛĚ ВЕТЕРАНĚСЕМ, ТЫЛ ĚÇЧЕНĚСЕМ, "ВĂРÇĂ АЧИСЕМ"!

Хаклă пенсионерсем!

Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунě ячěпе сире чěререн саламлатпăр. Çак куна паллă тунă май эпир пурнăçăн анлă çулне утса тухнă çынсене, аслă ăрăвăн вăрçă çулěсенчи тата ěçри паттăрлăхěн тěслěхне куратпăр. Гражданла активлă позици йышăннă май эсир паян та район умěнче тăракан задачăсене татса парассинчен айккинче тăрса юлмастăр. Пурнăçри хăвăрăн пуян опыта çитěнекен ăрăва паратăр. Эсир ěçлеме пултарни, профессионализм, ěç çине ответлăха туйса пăхни ветерансен юхăмěн ăнăçлă ěç-хěлěн никěсě пулса тăрать.

Сире ырă сывлăх сунатпăр. Чун çамрăклăхне сыхласа хăварса сирěн юратакан çынсемпе пěрле нумай çул тата телейлě пурăнмалла пултăр.

**Ветерансен районти канашěн председателě Е. КУЛИКОВА.**

**Агропромышленноç комплексěн ветеранěсен районти канашěн председателě В. ВЯЗОВ.**

**Пенсионерсен союзěн районти уйрăмěн канашěн председателě А. СКВОРЦОВ.**

### АСЛĂ ĂРУРИ ХИСЕПЛĚ СТРОИТЕЛЬСЕМ, ĚÇТЕШĚМĚРСЕМПЕ ЕНТЕШĚМĚРСЕМ!

Хамăр ветерансене, районта пурăнакан аслă ăру çыннисене Пěтěм тěнчери ватă çынсен кунěпе ăшшăн саламлатăп. Савăк кăмăлпа ăшă кулă яланах сирěнпе хуçаланччăр. Умри тěллевсем пěрлехисем пулччăр, вěсем вăхăтра пурнăçланччăр. Çакна валли сирěн пурсăрăн та çирěп сывлăх, тулăх кăмăл пултăр.

**"Моргаушская" строительство организацийěн генеральнăй директорě, депутатсен районти Пухăвěн депутачě В. СЕМЕНОВ.**

Октябрĕн 1-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ

# Чунĕпе çамрăк ветеран



Нискасси ялĕнче пурăнакан Лидия Ильина çак кунсенче хăйĕн 90 çулхи юбилейне паллă турĕ. Лидия Алексеевна – Чăваш АССР сывлăха сыхлассин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Хăйĕн пĕтĕм ĕç пурнăçне вăл çынсен сывлăхне сыхлассине халалланă. 1946 çултан тытăнса 1983 çулччен Нискассинчи фельдшерпа акушер пунктĕн заведующийĕнче тăрăшнă.

Аса илмелли, каласа памалли унăн сахал мар. Лидия Алексеевна Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕнче 1924 çулта çуралнă.

– Андриян Николаевпа эпир пĕр ялтан, пĕр урамра пурăннă, пĕр шкултах вĕреннĕ. Пĕррехинче вăл пирĕн пата Нискассине килнĕччĕ. Вăл ман çине пăхать, эпĕ – ун çине. Эпĕ унран: "Шуршăл Лидине ас тăватăр-и?" – тесе ыйтрăм. «Паллах ас тăватăп тесе вăл мана пырса ыталарĕ», – аса илет Лидия Алексеевна.

Шкул хыççăн Л.А. Ильина Çĕрпӳри училищĕре вĕреннĕ, кайран вара направленипе Нискасси ялне лекнĕ. Кунта вырăнти çамрăк каччăна Петр Дмитриевича тĕл пулнă, пĕрлешсе çемье çавăрнă. "Нискасси – манăн тĕпленсе пурăнмалли вырăн", – çапла тĕв тунă ун чухне Л. Ильина. Мăшăрĕ, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, вăрçă хыççăн çул-йĕр маçтăрĕнче, прорабра тăрăшнă. Шел пулин те, паян çук ĕнтĕ вăл çĕмйипе, мăшăрĕпе пĕрле.

Ильинсем вичĕ хĕр пăхса ӳстерсе ура çине тăратнă. Нина, Галина тата Валентина халĕ пурте пенсире ĕнтĕ, амăшне пулăшма тăрăшаççĕ. "Вĕсем пулман пулсан 90 çула çити пурăнаймăттăм. Питĕ лайăх манăн вĕсем", – хăйĕн хĕрĕсем пирки каласа парать ватă амăшĕ. 3 мăнукĕпе 2 кĕçĕн мăнукĕ те асламăшне савăнăç кӳреççĕ.

90 çул тултарнă май юбиляра район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Владислав Ананьев саламларĕ. "Эсир сывлăх сыхлавĕн сферинче чылай çул ырми-канми тăрăшнă, çапла вара районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывнă. Чăннипех мухтанатпăр эпир сирĕнпе. Сирĕн çине пăхатăн та ниепле те 90 çул тултарнă тесе калас килмест. Сăпайлăх, оптимизм, интеллигентлăх тата чун илемĕ сирĕнте палăрса тăраççĕ", – терĕ Владислав Кириллович. Юбиляра вăл Раççей Президенчĕн В.В. Путинăн, район администрацийĕн пуçлăхĕн Р.Н. Тимофеевăн саламлă çырăвĕсене, асăнмалăх парне тата чечек çыххи пачĕ.

"Эсир ырă ĕç тунă – çынсене сыватассишĕн тăрăшнă. Чун ăшшишĕн халĕ те тав сăмахĕ калаççĕ вĕсем сире. Татах нумай çул пурăнмалла, юбилейсене паллă тумалла пултăр", – палăртрĕ районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Валентина Аникина.

Юбиляра саламласа тав сăмахĕсене Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Я. Кожевников, медицина ĕçченĕсем те каларĕç. Лидия Алексеевна ячĕпе вырăнти артистсем илемлĕ чăваш юррисене шăрантарчĕç.

"Мана саламлама кун чухлĕ çын килет тесе шухăшламан та. В.В. Путин патне çыру çырса ярса салам сăмахĕсемшĕн тав тăвас килет. Татах пурăнасчĕ, ватлăхра савăнса пурăнма паян пурте пур", – савăнăçне пытараймасть юбиляр.

Эпир те Лидия Алексеевнăна çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул сунатпăр. Çумра яланах юратнă ачисем, мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем пулччăр. Вĕсен чун ăшши ăна пурăнма хавал кӳтĕр.

**Н. ГРИГОРЬЕВА.**

# Тивĕçлĕ канура кӳлĕннĕ ĕç




Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир Елизавета Сятынована кăçал Муркашра "Сывлăх – пыл хурчĕн çунаттисем çинче" ятпа 5-мĕш хут иртнĕ республикăри Пыл уявĕнче куратăр. Хурт-хăмăр ĕрчетесси, унран паха продукци илесси Муркашсемшĕн пĕлтерĕшлĕ вырăна тухса пыни пире ыттисем умĕнче мăнаçлантарать. Хамăр калаçăвăмăр пуçламăшĕнче Елизавета Димитриевна та пĕр чарăнмасăр тенĕ пекех чăваш пылне мухтарĕ, хăй туса илнĕ продукципе тулли кăмăлпа савăнчĕ.

– Пыл хурчĕпе пĕрле пулса эпир те сывă пурнăç çулне, тăрăшарах та тухăçлăрах ĕçлемелли енсене суйлатпăр, – тесе тулли пыл банкине ыталарĕ утарçă.

Кунта çакна каласа хăвармалла. "Сеятель" ял хуçалăх производство кооперативĕнче нумай çул уй-хир бригадирĕнче вăй хунă хĕрарăм тивĕçлĕ канăва тухсан пыл хурчĕсемпе тусланать. Кирек хăш ĕçре те тăрăшулăхпа палăрнăскерĕн ĕçченлĕхĕ пыл хурчĕсене те алла илме пулăшать. Çав телейлĕ кунран пуçласа 17 çул ĕнтĕ Е. Сятынова тăрăшуллă пыл хурчĕсемпе тачă çыхăнура пурăнать.

– Пыл хурчĕпе туслашни мана тивĕçлĕ канăва тухсан ĕçсĕр юласран сыхласа хăварчĕ. Кĕске хушăрах вĕсемпе пĕр чĕлхе тупрăм. Пыл хурчĕсемпе ĕçлесси куçа усрĕ, сут çанталăкпа çывăхарах пулма вĕрентрĕ, – терĕ вăл тавар туянакансене хăй туса илнĕ паха пыл сĕнсе. – Пыл хурчĕ тытасси – ответлă ĕç. Турă кайăкĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пултарни утарçăна укçа-тенкĕпе пĕрлех сывлăх та парать. Çемье çавăрнă, ачасем çуратса ӳстернĕ, пурăнмалли çурт-йĕр тунă, мăнуксене утăкка сиктернĕ çынна канлĕх те сывлăх çеç кирлĕ. Вĕсене мана пыл хурчĕсем параççĕ.

Пытарма кирлĕ мар, пыл пирĕн обществăн сывă апат-çимĕç никĕсĕ пулса тăрать. Вăл çыннăн пурнăçне тăсать, унăн пĕлĕвĕпе аталанăвне çутта кăларса обществăн аталану çулне уçать.

...Çулсем иртчĕр, анчах çак ырă ен ан çухалтăр. Елизавета Сятынова пек хастарсем малашне те ырă пулăмсен аталанăвĕн çĕнĕ алăкĕсене тăтăш уçасса шанатпăр.

**А. ПЕТРОВ.**

# "Ĕçрен пăрăнса çӳремерĕм"



Шăпа пӳрни тет умри йывăрлăхсене ыттисем çине тиеме хăнăхман чăваш çынни. Пирĕн паянхи тĕслĕхре те вăл çаплах килсе тухрĕ. Турай ял тăрăхĕнчи Анаткассинче пурăнакан Юлиана Филиппова та хăйĕн пурнăçне çĕр ĕçĕпе тата ял пурнăçĕпе çыхăнтарнине шăпа пӳрни тесе пĕтĕмлетет.

1928 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче халĕ пурăнакан вырăнтах çуралнă Юлиана амăшĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ пулнă. Çавăнпа та çĕр ĕçченĕн пĕтĕм йывăр ĕçне унăн та ачаллах хăйĕн хул пуççийĕ çине тиеме тивнĕ.

– Манăн ачалăхпа çамрăклăх Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсемпе тӳр килчĕ. Çул çитсен эпĕ те шкула кайрăм. Анчах хам салтак çемйинчен пулманран 8 класс хыççăн малалла вĕренме май килмерĕ. Хамăн пурнăçăма вара çĕр ĕçĕпе çыхăнтартăм. Колхозра лашапа суха ĕçĕсем пурнăçлани, çĕр сӳрелени, ял çыннисемпе пĕрле çĕр улми лартни манăн кулленхи пурнăçăмăн ĕç сыпăкĕсем пулса тăчĕç. Йывăрлăхран хăраса ĕçрен тарса çӳремен паян çын умĕнче пит хĕрелмест. Тĕрĕссипе вăл вăхăтра пĕр эпĕ çеç пулман ун пекки. Çавăнпа çĕнтертĕмĕр ĕнтĕ ирсĕр тăшмана, – терĕ пахчаран тирпейлесе кĕнĕ Юлиана Филипповна.

Юлиана Турай шкулне 5-мĕш класа кайнă чух пирĕн çĕр-шыва фашистла Германи вăрçăпа тапăнса кĕрет. Çав йывăр çулсем паян та Юлиана кинемей асĕнчех. Аслисене пулăшма шкула кайиччен те, уроксем хыççăн та кĕлте çыхма çӳрени, пур ĕçе те алăпа та лаша вăйĕпе пурнăçлани темĕн чухлĕ вăхăт иртсен те асран тухмасть.

Йывăр çулсенче ĕçре писĕхнĕ 86 çулхи кинемей паян та алă усса лармасть. Унăн килти хушма хуçалăхĕнче чăх-чĕпсĕр пуçне ĕне те пур. Вăл куллен 10 – 11-шер литр сĕт патшалăха сутни – асаннен паянхи паттăрлăхĕ. "Йывăр çулсенче те анне ĕнерен ютшăнман та, эпĕ паян мĕнрен кая?" – ыйтуллăн тинкерчĕ мана сĕт витри майлаштарса çакнă май Юлиана кинемей.

40 сотка пахчари ĕçсене вăхăтра пурнăçлассипе те кӳршисем пулăшнипе Юлиана Филипповна ял халăхĕнчен юлса пымасть. Çĕр улмийĕ те пур унта, суханĕпе ыхри те, хăярĕпе помидорĕ те, купăсти те.

Хăйĕн пурнăç ăнăçăвĕшĕн кӳршисене тав туса юлчĕ ĕç ветеранĕ.

**А. БЕЛОВ.**

# Ырă тĕслĕхре тытатăп



Эпĕ çамрăк-ха, анчах çĕр çинче ырă çынсем нумайăн пире те кулленхи пурнăçра курăнсах тăрать. Вĕсенчен пĕри – Шурчара пурăнакан манăн кукамай Дарья Кирилловна Терентьева. 1933 çулхи чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнăскер, эпĕ хăйне тĕслĕхе лартнă пек, хăйĕн амăшне нумай çул иртнине пăхмасăрах ыррипе кăна аса илет. Ашшĕ – Кирилл Терентьевич – йывăр чире пула пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнăран 1941 çул пуçламăшĕнче Евдокия Ефимовна 5 ачипе тăрса юлать. Çăва тухсан Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланать. Манăн кукамай ун чухне 8 çулта пулнă. Инçетри юнлă вăрçă чăваш ялĕсене те хуйхă-суйхă сахал мар илсе килнине унăн ачаллах курма тивнĕ. Вăрçă вăй питти арçынсемпе хуçалăхсенчи лашасене те фронта илсе кайнă. Хресченсем вăкăрсем кӳлсе суха тунă. Хĕллехи каçсенче хĕрарăмсем фронта валли чăлхасемпе алсишсем çыхнă. Тылра юнисем окопсем чавма час-часах çӳренĕ.

Вăрçă çулĕсенчи йывăрлăхсем кашни утăмрах пулнă. Вĕсене ĕç кăна çĕнме пултарнине пирĕн кукамай амăшĕ куллен майлах аса илтерсе тăнă. "Ĕçлĕр! Ĕçлесен выçса вилмĕр", – тăтăшах вĕрентнĕ пепкисене 5 ачапа юлнă амăшĕ. Пирĕн кукамай çак сăмахсене ăша хывсах ӳснĕ. Вăрçă çулĕсенче 5 класс пĕтернĕ хĕр ача шкула çӳренĕ кунĕсене шутласан пĕр çул вĕреннĕ-ши – ытти вăхăт йăлтах ĕçре иртнĕ. "Шкула кайиччен кантăр хуралĕ тăни, ирлесе тата уроксем хыççăн авăн çапни паян те асра. Ĕçрен хăрамарăмăр та тăшмана та çĕнтертĕмĕр", – тет иртни патне таврăннă вăхăтсенче кукамай.

14 çул тултарсан вăл Иваново облаçне кĕтӳ пăхма тухса каять. Çу каçа унта ĕçлесе илнĕ укçапа хĕр ача киле пир тĕртмелли шурă çип туянса таврăнать. Килти кашни çынна хăй аллипе çĕнĕ кĕпе-тумтир çĕлесе çыхса парать вăл.

Яла таврăнсан та кукамай ял хуçалăх ĕçĕнчен пăрăнман. Сыснине те пăхнă вăл, ĕнине те сунă, пăрусем патĕнче те ятне ямасăр ĕçленĕ.

Яваплăха туйса ĕçленĕ хĕр ачана пăру кĕтĕвне сыватса тĕреклетсен вăл вăхăтри хуçалăх ертӳçи В. Соловьев мухтанине кукамай паян кунчченех асра тытать:

– Чăн-чăн ылтăн техник, – тесе лăпкарĕ Василий Егорович пĕтĕм халăх умĕнче унăн ĕçне ырласа.

Хыççăнхи çулсенче сысна ферминче ытларах ĕçленĕрен кукамай кунта та ырă ят хăварма ĕлкĕрнĕ. Пĕр ама пусне вăтамран 26 сура илсе унăн ячĕ район хаçатĕнчи ĕç паттăрĕсен спискĕнче яланах малти ретре пулнă.

Ĕç ĕмĕрне выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлесе ирттернĕ кукамай паян хăйĕн хĕрĕ, пирĕн анне – Татьяна Ильинична Львова – вылăх тухтăрне вĕренсе хăйĕн ĕçне малалла тăснишĕн савăнать. Пире те – вичĕ мăнукне – ĕçе хăнăхтарать. "Ĕçлеме пĕлни пурнăçра кирлĕ пулать", – тет.

Эпир хамăр кукамая çав тери юрататпăр.

**Валерия ЛЬВОВА, Шурча шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен.**

# Налука вӑхӑтра тӳлемелле, ӗҫ укҫи саккунпа килӗшӳллӗ пулмалла

## Лару

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче район бюджет тупӑшне ӳстерессин тата ӗҫ укҫи вӑхӑтра та туллин тивӗҫтернин ыйтӑвӗсемпе тимлекен район администрацийӗн пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи ведомствӑсем хушшинчи комиссин черетлӗ анлӑ ларӑвӗ пулчӗ. Комисси ӗҫне Чӑваш Республикин финанс министрӗн ҫумӗ В. Иванов, Федераци налук службин Чӑваш Республикинчи управленийӗн ертӳҫин ҫумӗ С. Аристова тата ыттисем хутшӑнчӗҫ. Кун йӗркинчи тӗп ыйтусем – уйрӑм предприятисемпе организацисем налук тӳлес йӗркене пӑхӑнманни, ӗҫлекенсем тӗлӗшпе официаллӑ мар тата пӗчӗк шалу укҫи тӳлессипе усӑ курни. Ларӑва район администрацийӗн пуҫлӑхӗ тата асӑннӑ комисси ертӳҫи Р. Тимофеев уҫрӗ тата ертсе пычӗ.

Чи малтанах вӑл районти экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗпе паллаштарчӗ. Январь – август уйӑхӗсенче ял хуҫалӑх тата промышленность предприятийӗсем пӗтӗмпе 2009237 пин тенкӗлӗх (121,7 процент) продукци туса кӑларнӑ. Ял хуҫалӑх продукцине 312352,3 пин тенкӗлӗх (115,9 процент) туса илнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх отраслӗнче вара йывӑрлӑх палӑрать. Промышленность предприятийӗсем 1696884,4 пин тенкӗлӗх (122,9 процент) продукци кӑларнӑ. Ҫакӑнта акционерсен "Шупашкарти "Сеспель" предприяти" хупӑ обществин тӳпи пысӑк, вӑл 1061409 пин тенкӗлӗх продукци хатӗрленӗ. Район бюджечӗн харпӑр хӑй тупӑшӗ 111124,7 пин тенкӗпе танлашать е ҫакӑ иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртипе танлаштарсан 96,1 процент.

– Районӑн пӗтӗмӗшле аталанӑвӗ, социаллӑ пурнӑҫӗ налук пухӑнасси епле пынипе тачӑ ҫыхӑннӑ, ку вӑл – выӑнти бюджетӑн тӗп тытӑмӗ, – терӗ Ростислав Николаевич.

Парӑмҫӑсен лару-тӑрӑвне кашнине уйрӑммӑн С. Аристова тишкерӳ турӗ. Комисси итлевне чӗннӗ ҫак предприятисемпе организацисен ертӳҫисемпе специалисчӗсем килчӗҫ. "Свобода" хуҫалӑхри тӗп ӗҫ-хӗл – выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси. Ӗҫ укҫи тивӗҫлӗ шайра пулманран, налуксене вӑхӑтра тӳлеменрен хуҫалӑх ӗҫ-хӗлне комисси ларӑвӗнче пӑхса тухма йышӑннӑ. Л. Петров ертӳҫӗ кулленхи тӳлеве вӑхӑтра куҫарма, пухӑннӑ парӑма декабрӗн 15-мӗшӗччен татма шантарчӗ.

"Спецтехсервис" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн ертӳҫи В. Лаврентьев пӗлтернӗ тӑрӑх кунти тӗп ӗҫ-хӗл – техникӑпа ӗҫлесси. Ӗҫ укҫи калӑпӑшӗпе ӗҫлекенсен хисепӗ шайлашуллӑ мар. Пӗтӗм парӑма октябрӗн 15-мӗшӗччен татма, сентябрӗн 30-мӗшӗччен комиссине ҫӗнетнӗ штат расписанине тӑратма сӗнчӗҫ.

"Бездна" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессипе тимлеҫҫӗ. Хӑш-пӗр ыйту ҫине Л. Николаева специалист хуравларӗ. Тӳлевсем енӗпе йывӑрлӑх палӑрмасть, шалу укҫи пӗчӗкки вара комисси членӗсене тивӗҫтермест. Ҫавӑнпа та октябрӗн 15-мӗшӗччен кая юлмасӑр штат расписанине ҫӗнетме, тата ӗҫ укҫи шайне ӳстерме хушрӗҫ. Ку хушӑва пурнӑҫланин информацине асӑннӑ комиссие тӑратмалла.

"Фаворит" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра кайӑккӗшӗк ӗрчетессипе тимлеҫҫӗ. Унӑн ертӳҫи С. Григорьев каланӑ тӑрӑх кунти ӗҫ вӑхӑтлӑх чарӑннӑ. Ҫапах та документ ҫинче штат тӑрать, ӗҫ укҫи калӑпӑшӗ пӗчӗк. Ҫавӑнпа та ҫулталӑк вӗҫлениччен ӗҫ укҫи шайне хӑпартмалла, унӑн калӑпӑшӗ пурӑнмалли чи пӗчӗк виҫерен кая пулмалла мар. Тӗрӗслев органӗсемпе асӑннӑ общество хушшинчи йывӑрлӑха кӗске вӑхӑтра татса памалла.

"Созвездие" чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество ӗҫӗпе А. Портнова паллаштарчӗ. Кунта ачасен канӑвне йӗркелеҫҫӗ. Документсем тӑрӑх ӗҫлекенсен шалӑвӗ чылай пӗчӗк, ҫавна май ҫак ыйтӑва комисси членӗсем октябрӗн 5-мӗшӗччен уҫӑмлатма, ҫӗнетнӗ штат расписанине тата налук тӳленин документне тӑратма хушрӗҫ.

Малалла асӑннисем комисси итлевне килмен. Ҫавна май район прокуратурин "Юлия" тата "Мастерсити" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑсен ертӳҫисене налук тӳлеттерессипе ӗҫлемелле. Комисси членӗсен "Моргаушский" сӗт-ҫу завочӗн, унпа пӗрлех "Путь Ильича" агрофирмӑн, "Моргаушкорм", "ВТМ", "Лотос", "Чувашавтоком", "Павлов и Ко" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑсен ӗҫ-хӗлне уйрӑм тӗрӗслеве илмелле.

Асӑннӑ организацисемпе предприятисен, уйрӑм предпринимательсен парӑмсене татмалла, кулленхи тӳлевсене вӑхӑтра куҫармалла. Ҫакӑн пек йышӑну турӗҫ комисси членӗсем.

Кун йӗркинчи черетлӗ ыйту официаллӑ мар шалу укҫине те пырса тиврӗ. Организаци, предприяти ертӳҫи, вӑл шутра уйрӑм предприниматель те унта вӑй хума явӑҫтаракана саккунпа килӗшӳллӗн йышӑнмалла (ӗҫ килӗшӗвӗ, контракт йӗркелемелле тата ытти те), шалу укҫипе официаллӑ майпа тивӗҫтермелле. Саккун ыйтнине туллин пурнӑҫласан кӑна ӗҫлекен ҫын социаллӑ хӳтлӗхре шутланать. Районта вара ку тӗлӗшпе хальлӗхе лару-тӑру тивӗҫлӗ шайрах мар. Официаллӑ майпа тӳлемен ӗҫ укҫи граждансен прависене хӗсӗрлет, ҫак пулӑм вӗсене каярах тӳнтерле пырса тивет. Ку йӗркесӗрлӗх уйрӑмах коммерциллӗ организацисен, уйрӑм предпринимательсен ӗҫӗ-хӗлӗнче аван курӑнчӗ.

Ертӳҫӗсем Ӗҫ Кодексӗн йӗркисене сӗмсӗррӗн пӑсни палӑрать. Вӗсем ӗҫлекенсене Чӑваш Республикинче пурӑнма кирлӗ минимум виҫинчен самай пӗчӗк тӳлеҫҫӗ (официаллӑ документ тӑрӑх). Анчах та ӗҫлекен ҫын ҫакӑн пек йӗркесӗрлӗх ӑна хӑш енӗпе ура хуни пирки шухӑшламасть, уншӑн пулсан шалу укҫи килтӗр.

Ӗҫ паракан мӗнле усламшӑн тӑрӑшать-ха? Уйрӑм ҫыннӑн тупӑшӗ ҫине хуракан налука (налог на доходы физических лиц) ӗҫлекен тӳлет, бюджет мар фонда каякан тӳлевсене – ӗҫ паракан. Ҫапла вара ӗҫлекен ҫыншӑн пулсан шалу укҫи пысӑкрах пулни лайӑх, ӗҫ паракан, паллах, бюджет тата бюджет мар фонда сахалрах куҫарассишӗн тӑрӑшать. Вӑй питти ҫулсенче ҫакӑн пек тӳлев ӗҫлекене тивӗҫтерет те пулӗ, анчах умра – пулас пенси. Официаллӑ мар шалу пенси калӑпӑшне тӳрремӗнех пырса тивет.

Ӗҫ килӗшӗвӗсӗр, контрактсӑр ӗҫлекен ҫын социаллӑ хӳтлӗхе лекеймест, ҫакӑ вӗсен прависене хӗсӗрленипе ҫыхӑннӑ. Ҫавна май асӑннӑ категорин медицина страхованийӗн полисӗсем ҫук, ӗҫleme пултарайман тапхӑршӑн паракан пособие илеймеҫҫӗ, ҫурт-йӗр туяннӑшӑн, вӗренӳпе сиплевшӗн тӳленин налук вычечӗпе, кредит илес йӗркепе туллин усӑ кураймаҫҫӗ. Ҫапла вара ӗҫлеме пултаракан ҫулсенчи ҫыннӑн шалу укҫинчен налук куҫаймасть, ҫавна май вӑл ыттисемпе пӗр тан мар праваллӑ пек курӑнать. Официаллӑ мар ӗҫ укҫи тӗлӗшпе право йӗркине сыхлакан органсем тӗрӗслевсем ирттереҫҫӗ-ха, анчах та ҫак йӗркесӗрлӗхе сирессинче граждансен ӑнланӑвӗпе активлӑхӗ те кирлӗ. Кашни ҫын социаллӑ правана хӳтӗлеме пултармалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Спорт хыпарӗ

# Депутат парнисемшӗн

Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ врачӗн, Раҫҫей Федерацийӗн сывлӑх сыхлав отличникӗн, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн виҫӗ созыв депутачӗн тата депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗн Владислав Даниловӑн парнисене ҫӗнсе илессишӗн спорт ӑмӑртӑвӗ иртет.

Ҫак ӑмӑрту пирӗн районти ырӑ йӑлана кӗнисенчен пӗри шутланать. Унта кашни ҫулах чылай шкул ачи хутшӑнать. Пӗлтӗр акӑ Ҫатракассинчи вӑтам шкулӑн команди мала тухнӑччӗ. Иккӗмӗш вырӑнта – Муркашри, виҫҫӗмӗшӗнче Ярапайкассинчи вӑтам шкулсенче вӗренекенсем пулнӑччӗ. Кӑҫалхи ҫӗнтерӳҫӗсене ҫитес шӑмат кун, октябрӗн 4-мӗшӗнче иртекен кросра палӑртма май пулӗ.

Малти вырӑнсене тухнисене парнесем, медальсем тата грамотӑсем кӗтеҫҫӗ. Ӑмӑрту Владислав Григорьевич вӗренсе тухнӑ шкулта – Тойкилтӗри тӗп шкулта 11 сехетре пуҫланать.

## Саламлатпӑр



